25-мĕш çул тухать. Хакĕ 15 пус.

1942 МАЙ 27 ЮНКУН 121 (6056) №

Чăваш Коммуни

Пĕтĕм тĕнчери пролетарисем, пĕрлешĕр!

ВКП(б) ОБКОМĔПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧĔН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧĔН ТАТА ШУПАШКАР ХУЛА СОВЕЧĔН ХАÇАЧĔ

Çуракинче пысăк ĕç тухăçлăхĕпе тата лайăх пахалăхпа ĕçленĕшĕн, ВКП(б) райкомĕсемпе ĕçсынни депутачĕсен районсенчи Совечĕсен исполкомĕсем тăратнă тăрăх, ялхуçалăхĕнче малта пыракансен республикăри Хисеп хăми çине кĕртнĕ:

40. Калинински районри **«Чăваш Коммуни» колхоз** (колхоз председателĕ **Ф. И. Сантимер** юлташ). Колхоз ир акмалли тĕштырă культурисене 8 ĕç кунĕнче лайăх пахалăхпа акса пĕтернĕ. Çуракинче акмалли пĕтĕм вăрлăха колхоз йăлтах имçамсемпе чÿхесе тасатнă тата яровизациленĕ вăрлăхпа акса хăварнă. Оборона фондне хывма тата нимĕç оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă колхозниксене пулăшма колхоз планран иртерсе 6 гектар акса хăварнă. Акара **А. Кулаевский, А. Львов, В. Сапожникова** юлташсен бригадисем хăйсене уйрăмăнах палăртнă. Асăннă бригадăсем 7 ĕç кунĕнче акса пĕтернĕ. Сухаçăсем — **Данилов, Н. Плотников, Е. Прокопьева, А. Львов, А. Яковлев** юлташсем вăрçăри пек ĕçленĕ. Вĕсем кулленхи нормăна 125 процент тултарса пынă. Сÿрелекен **Константинова** юлташ планра кăтартса панă 3 гектар вырăнне кунсерен 3,5 гектар сÿреленĕ.

„Чăваш республикинчи ĕççынниcен делегацийĕ парнесемпе фронта кайса килни çинчен" ВКП(б) Чăваш Обкомĕн секретарĕ А. Матвеев юлташ тунă доклад тăрăх Партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ йышăннă

РЕЗОЛЮЦИ

Чăваш АССР ĕççыннийĕсен парнисене леçме делегаци фронта кайса килни çинчен Матвеев юлташăн докладне итленĕ хыççăн, партин Шупашкар хулинчи активĕн пухăвĕ Хĕрлĕ Çарăн боецĕсене, командирĕсене тата политработникĕсене, пирĕн тăван çĕршывăн ирĕклĕхĕшĕн тата никама пăхăнманлăхĕшĕн паттăррăн кĕрешекен, нимĕçсен фашистла оккупанчĕсене ним хĕрхенмесĕр пĕтерсе пыракан боецсене хĕрÿллĕн саламлать, тăшмана аркатса тăкас ĕçре çĕнĕ çитĕнÿсем тума вĕсене ырă сунать.

Актив пухăвĕ çапла шутлать: парнесем леçме делегаци фронта кайса килни ĕççыннисен тăван тата юратнă Хĕрлĕ Çаршăн амăшĕ пекех тăрăшнин демонстрацийĕ, гитлеризма пĕтĕмпех пĕтерсе тăкассишĕн хастарлăн кĕрешес шухăшкăмăлпа пурăнакан пирĕн фронтпа тылăн, çарпа халăхăн никам çĕмĕреймин пĕрлĕхне кăтартса пани пулса тăчĕ.

Оборона Халăх Комиссарĕ Сталин юлташ майăн 1-мĕшĕнчи приказра пирĕн халăх умне историллĕ аслă та пысăк задача—1942 çулта нимĕçсен фашистла войскисене пĕтĕмпех аркатса тăкас тата совет çĕрне гитлерла мерзавецсенчен ирĕке кăларас задача лартрĕ. Çак приказ Совет Союзĕнчи халăхсене геройла çĕнĕ ĕçсем тума тата ĕçре паттăрлăх кăтартма хавхалантарчĕ, Хĕрлĕ Çарăн паттăррăн çапăçас, наступлени туса пырас шухăш-кăмăлне татах та çÿлерех çĕклерĕ.

Шупашкар хулинчи ĕççыннисем Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕ çине конкретлă ĕçсемпе ответлерĕç. Предприятисенче социализмлă ăмăртăвăн çĕнĕ хумĕ анлăн саралчĕ, ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхĕ татах та çÿлерех çĕкленчĕ.

Парти организацийĕсен задачи çакăнта пулса тăрать: хулари ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне пуçарса ертсе пымалла, Сталин юлташăн приказне ăнăçлăн пурнăçа кĕртме халăха мобилизацилемелле тата организацилемелле, Хĕрлĕ Çара хĕçпăшал, боеприпассем, снаряженисем, апатçимĕç тата вăрçă ĕçне вĕрентсе хатĕрленĕ резервсем ытларах та ытларах парса тăрас тĕлĕшпе пирĕн тыл вăйлăнрах ĕçлесе тăмалла.

Фронт ыйтнисене тивĕçтерес енĕпе Шупашкар хулинчи промышленноçăн ролĕ юлашки вăхăтра нумай ÿсрĕ. Анчах хулари промышленность предприятийĕсем чылайĕшĕ хăйсен производство планĕсене тултарса пыраймаççĕ, уйрăм предприятисене (пиравăр фабрикипе чăлха фабрикине) пĕтĕм вăйпа ĕçе ярасси вăраха кайнă, куллен кирлĕ япаласем туса кăларас задание начар пурнăçа кĕртсе пыраççĕ (хулари промкомбинат, «Кооператор» артель).

Парти активĕн пухăвĕ çак предприятисен руководителĕсене тата парторганизацисен секретарĕсене хăйсен ĕçĕнчи çитменлĕхсене хăвăртрах пĕтерме тата социализмлă ăмăртăва анлăн сарнипе производствăри заданисене, уйрăмах васкавлă заданисене, пĕр сăмахсăрах пурнăçа кĕртсе пыма хушать.

Парти активĕн пухăвĕ кадрсем хатĕрлесси, çав шутра хĕрарăмсенчен ытларах хатĕрлесси çине тата производствăра ĕçлеме вĕрентесси çине, чĕртаварсемпе материалсен вырăнĕсене тупса вĕсемпе усă курасси тата предприятисене топливо яланах çителĕклĕ парса тăрасси çине парторганизацисен уйрăмăнах хытă çавăрăнса пăхма кирлине кăтартса парать.

Фронт тата çĕршыв валли апат-çимĕç çителĕклĕ тăратма кирлине асра тытса, парти активĕн пухăвĕ парторганизацисен секретарĕсене, предприятисен, учрежденисен тата колхозсен руководителĕсене подсобнăй хуçалăхсене, хула совхозĕсемпе колхозĕсенче ялхуçалăх продукчĕсене ытларах туса илессине, тухăçлăха ÿстерессине пурнăçа кĕртме, хула территоринче пушă выртакан çĕр участокĕсене пурне те акса пысăк усă илессине пурнăçа кĕртме хушать.

Парти активĕн пухăвĕ çапла шутлать: çар ĕçĕпе физкультура ĕçне лайăхлатмалла, хĕçпăшал тытма пултаракан кашни гражданинах çар ĕçне вĕрентмелле, тăрăшмалла, сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланма хулари граждансене пурне те вĕрентмелле. Манма юрамасть: тăшман сухату тÿснĕ çамĕн ытларах тискерленсе пырать, нихçан илтмен тискерлĕхсем тума пултарать. Сывлăшран тапăннинчен тата химиллĕ тапăнуран сыхланас ĕçсене пуринчен малтан светомаскировка тăвассине, хулари халăх пĕтĕмпех пурнăçа кĕрттĕр тесе парторганизацисен ялан тăрăшас пулать.

Парти активĕн пухăвĕ парторганизацисен секретарĕсене Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказне ăнлантарса парас тата практикăра пурнăçа кĕртес ĕçе, нимĕç оккупанчĕсем вăхăтлăха тытса илнĕ совет районĕсенче тăвакан тискерлĕхсем тата аркатса пĕтернисем çинчен Молотов юлташ çырнă нотăна ăнлантарас тĕлĕшпе ĕççыннисен анлă массисем хушшинче агитацилле-пропагандăллă ĕçе вăйлатма кирлине кăтартса парать.

Большевикла агитацие витĕмлĕ тата çивĕччĕн туса пынипе массăсене тăван çĕршывăн мухтавлăхĕшĕн геройла çĕнĕ ĕçсем тума çĕклемелле.

Парти активĕ парторганизацисене тата обществăллă организацисене Хĕрлĕ Çар боецĕсемшĕн кашни кунах тăрăшма хушать. Çакна госпитальсенче шефсен ĕçне лайăхлатса, фронтовиксемпе çыхăну тытса тата вĕсем патне посылкăсем ярса, фронтовиксен çемьисене, уйрăмах отечественнăй вăрçă фронтĕнче ашшĕ-амăшĕсем вилнĕ ачасене пулăшу парассине организацилесе туса пырас пулать.

Парти активĕ ачасене фашистла тискерлĕхрен хÿтĕлес ыйтупа хĕрарăмсен митингĕсемпе пухăвĕсене ирттерме хулари парторганизацисене тата обществăллă организацисене сĕнет. Тăлăха юлнă ачасене пулăшма укçа-тенкĕ пухассине тата уйрăм çемьесем çав ачасене ывăллăха илессине организацилемелле.

Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕ пур парторганизацисем умне те ответлă задачăсем кăларса тăратать: партилле-политикăллă ĕçе тата ытларах вăйлатмалла, массăсемпе çыхăнса тăрассине пуçран кунах çирĕплетсе пымалла, ĕççыннисен политикăллă тата производствăллă активлăхне пĕрмаях çĕклентерсе тата вăйлатса пымалла, вĕсене политикăллă воспитани парас ĕçе лайăхлатмалла, тăван çĕршывăн хĕрÿллĕ патриочĕсене партин ретне хутшăнтармалла.

Гитлеризма хирĕç пыракан вăрçă ытларах та ытларах хаярланать, тăшмана унăн мĕнпур тискер те ирсĕр ĕçĕсемшĕн тавăрас сехет çывхарать. Çав пурне те тарăхтарса çитернĕ тăшмана хăвăртрах аркатса тăкас задачăсем мĕнпур халăха Ленинăн—Сталинăн çĕнтерÿллĕ ялавĕ айне мобилизацилеме тата тачă пĕрлештерме хушаççĕ.

Парти активĕн пухăвĕ коммунистсемпе комсомолецсене пурне те, Шупашкар хулин ĕççыннийĕсене пурне те тăван çĕршывшăн, фронта пулăшса тăрассине вăйлатассишĕн çине тăрса ĕçлеме чĕнет. Сталин юлташăн майăн 1-мĕшĕнчи приказĕнче кăтартса панă задачăсене большевикла пурнăçа кĕртсе пыма чĕнет.

Совет Информаци Бюровĕнчен

Майăн 25-мĕшĕнчи каçхи пĕлтерÿ

Майăн 25-мĕшĕнче **Харьков** енче çапăçусем пулса пынă.

Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç хаяррăн çапăçнă.

Фронтăн ытти участокĕсенче нимĕнле пысăк ĕçсемех те пулса иртмен.

Майăн 24-мĕшĕнче нимĕçсен 10 самолетне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн 7 самолет пĕтнĕ.

* * *

Майăн 24-мĕшĕнче пирĕн авиаци чаçĕсем фронтăн тĕрлĕ участокĕсенче нимĕçсен 19 танкне, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 160 автомашине, 5 бензозаправщикне, горючи тултарнă цистернăсен составне пĕтерсе тăкнă е сиенленĕ, противникăн пехотине 5 ротăна çити сапаласа янă, пĕр пайне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Пирĕн часть, Изюм—Барвенково енчи участоксенчен пĕринче противникăн атакисене сире-сире пырса, виçĕ кун хушши çапăçса нимĕçсен 11 танкне, 3 бронемашинине, танксене хирĕç пемелли 8 орудине, войскăсемпе грузсем турттарса пыракан 170 автомашинине, боеприпассен складне тата 500 салтакĕпе офицерне ытла пĕтерсе тăкнă. Ĕнер çав участокрах пирĕн боецсем, старши лейтенант Мариненко командир пулса ертсе пынипе, противникăн контратакине сирсе пăрахнă тата 80 гитлеровеца пĕтерсе тăкнă. Тăшмана хирĕç пирĕн танкистсем питĕ хăюллăн çапăçнă. Лейтенант Беляев танкĕн экипажĕ тĕл персе нимĕçсен виçĕ танкне çунтарса янă тата 100 нимĕçе яхăн пĕтерсе тăкнă. Кĕçĕн лейтенант Николаев танкĕн экипажĕ 4 дзот, темиçе оруди тата противникăн пехотине турттарса пыракан 28 автомашинăна пĕтерсе тăкнă.

* * *

Кăнтăр фронтĕнче пĕр кун хушшинче сывлăшра темиçе çапăçу пулса иртнĕ. Старши лейтенант Лапушкин нимĕçсен икĕ самолетне персе ÿкернĕ. Сержант Снитков фашистсен бомбардировщикне пĕтерсе тăкнă. Кĕçĕн лейтенант Утянский «Юнкерс—88» йышши самолета персе ÿкернĕ. Сывлăшра çапăçнă чухне ун çине нимĕç истребителĕ тапăннă. Пултаруллă маневр туса, Утянский юлташ тăшман хыçне пырса тухнă та нимĕç машинин хÿринчи пайне хăйĕн пропеллерĕпе касса татнă. «Мессершмитт» çĕр çине персе аннă. Утянский юлташ хăйĕн аэродромĕ çине ăнăçлăнах анса ларнă.

* * *

Лейтенант-орденоносец Шамахов юлташ, орудин командирĕ Свинаренко юлташ, наводчик Трибунов тата ултă красноармеец нимĕçсен виçĕ танкĕ патне йăпшăнса пынă та танксенчен тухса тăнă экипажсем çине пеме тытăннă. Гитлеровецсем хăраса ÿксе тарса силаннă. Пирĕн боецсем нимĕçсен танкĕсене тытса илнĕ те вĕсене хăйсен чаçне илсе пырса панă.

* * *

Пирĕн часть, Рябухин юлташ командир пулса ертсе пынипе (Калинин фрончĕ), нимĕçсен контратакине вĕсене пысăк сухатусем кÿрсе сирсе пăрахнă. Çапăçу хирĕнче противникăн 250 ытла салтакĕпе офицерĕ вилсе юлнă. Тепĕр участокра Гришин юлташ командир пулса тăракан чаçри артиллеристсем противник артиллерин батарейипе миноментсен темиçе батарейине, 7 автомашинине тата 100 гитлеровеца çити пĕтерсе тăкнă.

* * *

Партизансен В., Л. тата И. юлташсем командир пулса ертсе пыракан отрячĕсем, Ленинград облаçĕн нимĕçсем оккупациленĕ районĕсенче кĕрешекенскерсем, май уйăхĕ хушшинче нимĕçсен фашистла захватчикĕсене 1200 çынна пĕтерсе тăкнă. Партизансем противникăн 12 танкне çунтарса янă, войскăсен 4 эшелонне тата пĕр бронепоезда ÿпĕнтерсе янă, боеприпассен 8 складне тата горючин 4 складне сирпĕнтерсе янă.

* * *

Нимĕçсен 208-мĕш пехотнăй полкĕн 13-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Иоганн Кнопп çапла каласа панă: «Юлашки çапăçу пулас умĕн (эпĕ вăл çапăçура пулнă) 13-мĕш ротăн икĕ взводне 208-мĕш полкăн иккĕмĕш батальонĕ çумне хушса панăччĕ. Часах батальона сирĕннисем çавăрса илнĕ те батальонра паника пуçланса кайнă. Орудисене, снаряжение, аманнисене пăрахса хăварнă, анчах та никам та тарса хăтăлайман. Вырăссем çавăн пек хăвăрт та вăйлă наступлени туса пырасса пиртен никам та кĕтмен».

* * *

Тыткăна лекнĕ финн салтакĕ Вейкко Юнтунен çапла каласа панă: «Вăрçă Финляндие шутсăр нумай хăнхур кăтартрĕ. Выçăпа вилес мар тесе, нумай хресченсен вăрлăхлăх тырра та çисе яма тивнĕ. Манăн аттен мĕнпур тыррине, мĕнпур уттине тата вăрлăхлăх хăварнă çĕрулмине те туртса илнĕ. Пирĕн Койсила ялĕнче мĕнпурĕ те 3 лаша çеç юлнă, ыттисене пурне те çара илнĕ. Вăрлăх çук, лаша çук. Выçăхса пурăнакан хресченсем хăйсен хирĕсене акса хăварас тесе темĕнле тăрăшсан та акса хăвараймаççĕ ĕнтĕ».

Майăн 26-мĕшĕнчи ирхи пĕлтерÿ

Майăн 26-мĕш ыран тенĕ чух çĕрле **Харьков** енче пирĕн войскăсем хăйсем йышăннă рубежсене çирĕплетсе пынă.

Изюм—Барвенково енче пирĕн войскăсем противникăн танкĕсемпе пехотине хирĕç оборонăллă çапăçусем туса пынă.

Фронтăн ытти участокĕсенче пысăк улшăнусемех пулман.

* * *

Изюм—Барвенково енче нимĕçсен фашистла войскисен атакисене сире-сире ярса, пирĕн боецсем противникăн танковăй чаçĕсене пысăк сухатусем кÿресçĕ. Участоксенчен пĕринче танка хирĕç пемелли пăшалсен Нестеров юлташ ертсе пыракан расчечĕсем нимĕçсен 4 танкне тĕл персе пĕтерсе тăкнă. Поляков юлташ командир пулса ертсе пыракан боецсем минăсем хурса нимĕçсен 7 танкне çĕмĕрнĕ. Шевелев юлташ чаçĕнчи зенитчиксем противникăн темиçе танкне пĕтерсе тăкнă. Пирĕн танкистсем тăшмана уйрăмăнах пысăк сухатусем тÿстерессĕ. Пирĕн танксен пĕр чаçĕ икĕ кун хушшинчи çапăçусенче нимĕçсен 27 танкне пĕтерсе тăкнă.

* * *

Горбунов юлташ ертсе пыракан чаçри боецсем (Калинин фрончĕ) нимĕçсен атакине ăнăçлăн сирсе янă. Противникăн салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çын ытла вилсе юлнă.

* * *

Пирĕн чаçăн артиллеристĕсем (Çурçĕр-Хĕвеланăç фрончĕ) пĕр кун хушшинче нимĕçсен 12 дзотне, 14 блиндажне çĕмĕрсе тăкнă. Артиллерин 9 батарейине тата минометсен 16 батарейине пусарса лартнă.

* * *

Ховалкин лейтенантăн подразделенийĕ артиллерирен персе нимĕçсен 6 орудийĕн расчечĕсене стройран кăларнă. Гитлеровецсем çав орудисене илсе каймашкăн темиçе хут та хăтланса пăхни ăнăçсăр пулнă. Тĕттĕм пулса çитсен, пирĕн боецсем çав 6 орудие пурне те хăйсен чаçне илсе пынă.

* * *

Кĕçĕн политрукăн Глаголев юлташăн подразделенийĕнчи красноармеецсем тăшманăн 2 самолетне курнă та вĕсем çине винтовкăсенчен ушкăнпа пеме тытăннă. Нимĕçсен пĕр самолечĕ çунма пуçласа пирĕн территори çине ÿксе çĕмĕрĕлнĕ.

* * *

Смоленск облаçĕнче кĕрешекен партизансен отрячĕ майăн 16-мĕшĕнче нимĕçсен фашистла оккупанчĕсен пысăк карательнăй отрядне аркатса тăкнă. Гитлеровецсен салтакĕсемпе офицерĕсем 200 çынна çити вилсе юлнă.

* * *

Нимĕçсен 71-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 211-мĕш полкăн 1-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ ефрейтор Ульрих Вальтер çапла каласа панă: «Темиçе кун каярах вырăссем пирĕн оборона линине сасартăк татса кĕчĕç. Совет танкĕсем тата вĕсем хыççăн пыракан пехота пирĕн салтаксене хăратса ÿкерчĕç. Эпир питĕ пысăк сухатусем турăмăр. Пĕрремĕш батальон хăйĕн составĕн виçĕ чĕрĕкне çухатрĕ. Тепĕр кунне пирĕн взвод оборонăра пулчĕ. Пирĕн блиндажра 8 çынччĕ. Эпир парăнма шут тытрăмăр. Оберефрейтор Лампель хĕç çумне шурă тутăр çыхрĕ те ăна пуç тăрне çÿле çĕклерĕ. Вырăссем сигнала курчĕç те пире тыткăна илчĕç».

* * *

Нимĕçсен 26-мĕш пехотнăй дивизийĕнчи 78-мĕш полкăн 4-мĕш ротинчен тыткăна лекнĕ салтак Юлиус Зайтерле çапла пĕлтернĕ: «Апрелĕн 26-мĕшĕнче ефрейтор Ганс Майер тата салтак Карл Вернер совет листовкине вуланă. Çав вăхăтра вĕсем патĕнчен рота командирĕ лейтенант Роммель Кирхнер иртсе пынă. Вăл çав листовкăна тытса илнĕ те çурса тăкнă. Çакăн хыççăн Роммель Кирхнер ротăна пухса тăратма приказ панă, вара строй умĕнче Майерпа Вернера персе вĕлерчĕ. Хаяр террора пăхмасăрах, салтаксем совет листовкисене питĕ интересленсе вулаççĕ, вĕсене хăйсен çумĕнче пытарса усраççĕ».

* * *

Гитлеровецсем Балтика таврашĕнчи республикăсенчи рабочисене ирĕксĕрлесех Германие илсе каяççĕ, вĕсене хăйсен чурисем туса хураççĕ. Ирĕксĕр ĕçе каяссинчен пăрăнма хăтланакансене пурне те оккупантсем концлагерьсене тата тĕрмесене хупаççĕ. Таллин хулинче пĕчĕк ачасем нумайĕшĕ ашшĕ-амăшĕсĕр тăрса юлнă, мĕншĕн тесен вĕсен ашшĕ-амăшĕсене Германие ирĕксĕрлесе ĕçлеттерме вăйпах илсе кайнă.

Пирĕн çулпуçа тата учителе, юратнă Иосиф Виссарионович СТАЛИНА

Смоленск облаçĕн Н-ски районĕнчи тăшманăн тылĕнчи партизансемпе ĕççыннисен çырăвĕ

Пирĕн хаклă, юратнă атте, учитель, çулпуç — Иосиф Виссарионович!

Эпир, Смоленск облаçĕн Н-ски районĕнчи партизансемпе партизанкăсем, колхозниксемпе колхозницăсем, рабочисем тата интеллигенци, Сире чунтан юратса хĕрÿллĕ салам яратпăр тата Сире нумайччен пурăнма сунатпăр. Нимĕç варварĕсем вăхăтлăха оккупациленĕ территорире пурăнакансем пулса тăрса, эпир фашистла ирсĕрсем мăшкăлласа кулнине, çаратнине, вĕлернине, пусмăрланине тăвата уйăх хушши чăтса пурăнтăмăр.

Тăван çĕршывран татăлса пурăнма, фашистсен суя пропагандин шăршлă сывлăшĕпе сывласа пурăнма питĕ те йывăрччĕ. Уйрăм предательсем, сутăнчăксем гитлерла бандитсем патне лакей вырăнĕнче ĕçлеме кĕрĕшнине, вĕсемпе пĕрле пирĕн халăха çаратнине, унтан мăшкăлласа кулнине курсан, чĕре юнланатчĕ.

Çав условисенче пурăнса, эпир хамăр социализм çĕршывĕн аслă халăхĕн ывăлĕсемпе хĕрĕсем пулса тăнине пĕр минутăлăха та манман, усал тăшмана çĕнтерессине пĕр минутăлăха та ĕненме пăрахман.

Эсир пирĕн халăха оккупантсене хирĕç мĕнле кĕрешмеллине кăтартса панисене эпир лайăх асра тытнă. Фашистсем кансĕрленĕ пулсан та, эпир Совет Союзĕнче Октябрьти социализмлă аслă революци XXIV çул тултарнине уявланă чухне Эсир каланă сăмахсене илтрĕмĕр.

Пирĕн чаплă хăватлă Хĕрлĕ Çар оборонăран наступлени куçнине, гитлерла бандитсене кăнтăрта, Ленинград патĕнче тата Мускав çывăхĕнче аркатса тăкнине, хĕвеланăçнелле ăнăçлăн куçса пынине, пирĕн тăван çĕре фашистла варварсенчен ирĕке кăларса пынине эпир пĕлтĕмĕр.

Тăшмана аркатса тăкас ĕçре пирĕн Хĕрлĕ Çара пулăшмашкăн эпир партизанла отрядсем турăмăр, çав отрядсем нимĕç оккупанчĕсемпе çапăçса пырса партизанла батальонсемпе полксем таран ÿссе çитрĕç.

Тăван çĕршывшăн пынă кĕрешÿсенче совет патриочĕсем — пирĕн отрядсенчи боецсем нумайĕшĕ хăйсене чăн-чăн геройсем пек кăтартрĕç. Çапла, сăмахран, «Дедушка» ятлă отрядри разведчица — 17 çулти комсомолка Ульяна Арсеньева йĕлтĕрпе пынă чухне çул çинче пилĕк нимĕçе курнă. Засада туса, вăл çав нимĕçсене пурне те вĕлерсе пĕтернĕ.

К. ялĕ патĕнче çапăçнă чухне отряд çумне çав ялти çын Огурцов юлташ пырса хутшăннă. Хăйĕн çурчĕ çывăхĕнче юра чавса траншея тунă та, винтовкăран персе, вăл 16 гитлеровеца вĕлернĕ, вара хăй герой пек вилнĕ.

Отрядсенчен пĕрне организациленĕ çамрăк врач И. А. Лечтупский комсомолец М. ялĕ патĕнче çапăçнă чухне противник артиллерирен персе тăнă вăхăтрах 10 аманнă боеца илсе тухса медицина пулăшăвĕ панă. Хăйне кăкăрĕнчен амантнă пулин те, вăл çапăçу пĕтиччченех çапăçнă, виçĕ нимĕçе вĕлернĕ.

Пирĕн тăван çĕршыв çавăн пек хăюллă паттăрсене пăхса ÿстернĕ, çавăн пек паттăрсем пирĕн хушăра нумай.

Халĕ пирĕн районпа кÿршĕ районсен чылай территорийĕсем çинче фашистла оккупантсем урăх çук ĕнтĕ. Вĕсен пиншер çыннисене вĕлерсе пĕтернĕ. Пĕр март уйăхĕнче кăна та эпир 1300 фашистла варвăра вĕлернĕ тата пин çынна ытла амантнă. Гитлерла оккупантсене пĕтерсе пырса, эпир вĕсен тарçисене те — хамăр тăван çĕршывăн сутăнчăкĕсемпе предателĕсене — пĕр шеллемесĕр тыткалатпăр.

Хĕрлĕ Çарăн чаçĕсемпе пĕрле, пирĕн мухтавлă утлă гвардеецсемпе пĕрле эпир фашистсенчен ирĕке кăларнă хамăр çĕре хытă хÿтĕлетпĕр, тăшманăн тылĕнче партизансен çĕнĕ отрячĕсене тăватпăр, оккупантсенчен çĕнĕрен çĕнĕ ялсемпе хуласене ирĕке кăларатпăр, чугунçулсене, кĕперсене çĕмĕретпĕр, фашистла çарăн тылĕсене пыра-пыра çапатпăр.

Нимĕçсен оккупанчĕсенчен ирĕке кăларнă ялсемпе хуласенче эпир совет влаçĕн органĕсене çĕнĕрен туса хутăмăр. Колхозсенче çуракине хатĕрленме тытăнтăмăр. Эпир пĕлетпĕр: гитлерла бандитсене çĕнтерме кашкăн хĕçпăшалсăр пуçне тата çăкăр кирлĕ.

Çуракине хатĕрленме тытăнса, эпир вăрлăх пухма пуçларăмăр, ялхуçалăх инвентарĕсене, хăмăт-пăявсене юсатпăр, ĕç выльăхне хатĕрлетпĕр. Ĕçвăрлăхсем пирĕн нумай пулĕç. Гитлерла бандăсем пире йăлтах çаратса пĕтерчĕç, анчах эпир хамăр çĕре пĕтĕмпех, пĕр татăк хăвармасăр акмашкăн пĕтĕм вăя, пĕтĕм пурлăха хурăпăр.

Гитлерла йытвĕтĕвĕсене чаçрах аркатса тăкмашкăн хамăрăн мухтавлă Хĕрлĕ Çара пулăшма пĕтĕм вăя хурăпăр.

Пирĕн район хамăрăн пĕтĕм тăван çĕршывпа пĕрлешес куна, вăл фашистла бандитсем çавăрса илнĕ утрав пулса тăрасси пĕтес куна эпир çавтери кĕтсе тăратпăр. Çав кун вăл пирĕн пурнăçра чи савăнăçлă кун пулса тăрĕ.

Пирĕн тăван Иосиф Виссарионович, хамăр çапла сăмах панине эпир пурнăçа кĕртĕпĕр тесе Сирĕн умăрта тупа тăватпăр.

Сывă пултăр пирĕн чаплă Тăван çĕршыв!

Фашистла оккупантсене — вилĕм!

Сывă пултăр пирĕн хăватлă Хĕрлĕ Çар!

Сывă пултăр пирĕн тăван, юратнă атте И. В. Сталин!

Çыру айне районри партизансем, колхозниксемпе колхозницăсем, рабочисем тата интеллигенци, пурĕ 15 пин çын, алă пуснă.

Чакса пыракан тăшмана партизансем аркатаççĕ

КĂНТĂР-ХĔВЕЛАНĂÇ ФРОНЧĔ, майăн 24-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Харьков енче наступлениллĕ хаяр çапăçусем пыраççĕ. Партизансен отрячĕсем каялла чакакан гитлерла бандăсене çапа-çапа аркатма Хĕрлĕ Çара пулăшаççĕ. Ĕçсем ăнманнипе урса кайнă тăшман юнлă тискер ĕçсем тăвать. Пирĕн войскăсем хĕснипе М. ялĕнчен тухса кайнă чух нимĕçсем 150 килçурта вут тивертсе хăварнă, çĕршер мирлĕ халăха персе пăрахнă, нумайĕшне каторгăлла ĕç тума Германие хăваласа кайнă. Гитлеровецсем каялла чакса пыракан çул çине, вăрмана партизансем пытанса ларнă. Кĕтмен çĕртен автоматсенчен вăйлăн пеме пуçланă тĕле çитсен, фашистсем çаратса пухнă пурлăхсемпе хĕçпăшалĕсене пăрахсах каялла чакнă.

Нумай уйăх пĕчченшерĕн кĕрешнĕ партизанла отрядсем халĕ пĕрлешсе пысăк ушкăнсемпе тухаççĕ. Пĕр ялти çынсем П. юлташ ертсе пыракан отряда нимĕçсен боеприпассемпе продовольстви турттарса пыракан пысăк обозĕ иртсе пыни çинчен систернĕ. Фашистсен позицийĕ патне пысăк пулăшу çывхарса пынă. Партизансем çак обоза фронт патне çитиччен пĕтерсе тăкма шутланă. Çак шутпа П. юлташ отрячĕ кÿршĕри партизансен отрячĕн командирĕпе çыхăннă та хăйсен мĕнпур вăйне хисепе илнĕ тата нимĕçсен обозĕ çине хăш тĕлте, мĕнле вăхăтра тапăнасси çинчен калаçса татăлнă. Çакăн хыççăн партизансен пĕрлешнĕ отрячĕ хăйĕн автоматчикĕсен темиçе ушкăнне обоз иртсе пыракан çулăн икĕ айăккине вырнаçтарнă, отрядăн тĕп вăйĕ обоз умĕнчи çула пÿлсе тăнă. Нимĕçсем çак таната ăшне кĕрсе çитсен, партизансем вĕсене сасартăк çунтарма тытăннă. Фашистсем малалла тухса кайма тăрăшнă, анчах та партизансен умра тăракан ушкăнĕ вĕсен çулне картласа хунă. Пĕтĕм çĕр фашистсен салтакĕсен виллисемпе, çĕмĕрĕлнĕ лавсемпе, сирпĕннĕ снарядсен ванчăкĕсемпе витĕннĕ. Партизансен отрячĕ трофейăсем нумай тытса илнĕ.

Партизансем фашистсене кăнтăрла та, каçхине те хыçранах йĕрлесе çÿреççĕ, вĕсем чакса тухакан çулсем çине минăсем лартаççĕ. Çак майпа вĕсем хамăр çĕршывран пĕр фашиста та каялла чĕррĕн хăтăлса тухма май парас мар тесе тăрăшаççĕ.

Д. ЩУКИН.

ЯСНАЯ ПОЛЯНĂРИ ПРАЗДНИК

ЯСНАЯ ПОЛЯНА, майăн 24-мĕш. **(ТАСС спецкорĕ).** Нимĕçсен фашистла захватчикĕсем çĕмĕрсе çаратнă памятнике, вырăс культурин аслă памятникне, вырăс халăхĕн мухтавлăхĕпе чаплăхне çĕнĕрен юсаса йĕркене кĕртнĕ. Çакăн пек хыпар саралсан, Ясная Полянăна таврари ялсенчи çынсем, Хĕрлĕ Çар боецĕсемпе командирĕсем, Мускавпа Тула хулинчен янă йышлă делегацисем нумай пырса тулчĕç. Л. Н. Толстойăн çĕнĕрен юсаса йĕркеленĕ музей-усадьбине уçни — халăхăн пысăк праздникĕ пулса тăчĕ.

Толстой усадьбине юсаса çитернĕ ятпа музей терраси çинче савăнăçлă пуху пулса иртрĕ. Пухăва партин Тула обкомĕн секретарĕ Жаворонков юлташ уçрĕ. Музей-усадьбăна çĕнĕрен уçнă ятпа — Ярославскипе Митин академиксем, Бородинпа Шишков писательсем, О. А. Толстая, Тулари хĕçпăшал тăвакан заводра ĕçлекен Щербачев тата Хĕрлĕ Çарăн Н-ски часть командирĕ Сизов юлташсем сăмах тухса каларĕç.

Савăнăçлă пуху хыççăн пуçтарăннă çынсем çĕнĕрен йĕркелесе лартнă музея пăхса тухрĕç.

Çураки ĕçĕсем вĕçленсе пыраççĕ

КОМСОМОЛЬСКОЕ, майăн 26-мĕш. (Телефонпа). Районри 51 колхозран 42 колхозĕ çуртыррисем, техникăллă культурăсем акас тата çĕрулмипе пахча-çимĕç лартас ĕçе пĕтĕмĕшпех туса çитерчĕ. Пĕтĕмĕшпе илсен, кăçал пирĕн районри колхозсем çуракине 9—10 ĕç кунĕ хушшинче туса çитерчĕç. 4 колхоз кăна пăрça йышши культурăсене акас тĕлĕшпе тата 9 колхоз çĕрулми лартас тĕлĕшпе каярах юлчĕç. Вĕсем те ку ĕçе майăн-ыранах туса çитереççĕ.

Çуракинче юлсарах пыракан «Янка Турмыш», «Красный Восток», «Восток» колхозсене тракторсем ярса тата юнти колхозсенчен лашасем ярса акана хăвăртрах вĕçлеме пулăшу паратпăр. Паян ку колхозсенче те çуртырисем акас ĕç вĕçленет.

Кăçалхи çуракинче колхозниксемпе колхозницăсем пысăк çĕкленупе ĕçлерĕç. Тăван çĕршыва фашистла ирсĕрсенчен хăтăртас тесе тăрăшса колхозниксемпе колхозницăсем кăçал пĕтĕм вăя хурса ĕçлеççĕ. Районри «Хĕрлĕ Октябрь» колхоз çуракинчи ĕçсене пысăк пахалăхпа 9 ĕç кунĕ хушшинче вĕçлерĕ. Суртри тыррисен 70 процентне сеялкăсемпе акса хăварчĕ.

Колхоз председателĕ коммунист Акчурин юлташ колхозăн ĕç вăйне тĕрĕс организациленсе ертсе пынипе, çуракине кунта пысăк пахалăхпа тунă. Акнă тырăсем тĕрĕс-тĕкел шăтса тухни колхозниксене савăнăçлă ĕмĕт кўрет. Пултаруллă хĕрача Школьникова председатель пулса ĕçлекен Красин ячĕпе тăракан колхоз та çуракинчи ĕçсене 9 кун хушшинче вĕçленĕ. Тĕштырăсен 72 процентне яхăн сеялкăсемпе акса хăварнă.

Районри машинно-тракторнăй станци çуракинче тракторпа тумалли ĕç планне 80 процента яхăн пурнăçларĕ. Чылай трактористсем пысăк пултарулăхпа ĕçлерĕç.

В. АЛЕКСЕЕВ.

Райçĕрĕç пайĕн заведующийĕ.

Пилĕк кун хушшинче 32 ĕçкунĕ ĕçлесе илнĕ

КУКЕÇ. Оборона Халăх Комиссарĕн Сталин юлташăн майăн пĕрремĕшĕнчи приказĕпе хавхаланнă колхозниксем уйхирте стахановла ĕçлеççĕ.

Самукассинчи Ворошилов ячĕпе тăракан колхозăн членĕ Василий Федоров çураки вăхăтĕнче 8 кун хушшинче 31,5 ĕçкунĕ, Валентин Ивановпа Михаил Андроев—22-шер ĕçкунĕ тунă. Платон Матвеев 5 кунра 32 ĕçкунĕ чухлĕ ĕçленĕ, Григорий Гаврилов 7 кун хушшинче 21 ĕçкунĕ тунă. Çураки вăхăтĕнче колхозра ушкăнпа апатланас ĕçе организациленĕ пулнă.

Ильбешри «Хĕрлĕ çăлтăр» колхозра В. Самсонов 8 кун хушшинче 18 ĕçкунĕ, К. Якимов çав вăхăтрах 19 ĕçкунĕ тунă, Яков Федоров кашни кунах 2 ĕçкунлĕх ĕçлет. Колхозра политикăллă-массăллă ĕçе лайăх туса пыраççĕ. Кашни кунах калаçусем ирттереççĕ, хаçатсем вуласа параççĕ, стена хаçачĕсене тăтăшах кăларса тăраççĕ.

Ф. ПЕТРОВА.

Хастарлă колхозница

ЕТĔРНЕ. Отечественнăй аслă вăрçă пынă вăхăтра Урапакассинчи «Правда» колхоз членĕ Варвара Степанова хăйĕн ĕçлес хастарлăхне ўстерчĕ. Унăн упăшки Корнилий фронтра паттăррăн çапăçать.

Варвара ĕç фронтĕнче çĕрне-кунне пĕлмесĕр ывăнмасăр ĕçлет. Вăл, çураки ĕçĕсем пуçланнăранпа вăрах, уйра суха тăвать. Ĕç нормине яланах 100—150 процент тултарать. Çавна май кунне 2,5—3 ĕçкунĕ таран илет. Плана пĕр гектар сухалас вырăнне вăл 1,5 гектар ытларах та сухалать.

Степанова Варвара колхозра хĕрўллĕн ĕçлесе фронта пулăшса пырать. Государствăн Военнăй заемне вăл 600 тенкĕлĕх çырăнчĕ, укçине те çийĕнчех парса татрĕ. Оборона фондне 5 ĕçкунĕ панă тата Хĕрлĕ Çар боецĕсем валли ăшă тумтирсем нумай туса панă.

И. ЛЬВОВ.

Пионер Коля Леонтьев хастарлăн ĕçлерĕ

ШĂХАСАН. (Телефонпа). Энри ялĕнчи «Герой» колхозăн 6-мĕш бригади майăн 11-мĕш тĕлне тĕштырă культурисене акса пĕтерчĕ. Пурĕ 41 гектар акнă; вăл шутра 13 гектар тулă, 4 гектар кок-сагыз, 20 гектар вика тата ыттисем те. Сўрелене çĕрте 13 çулти пионер Коля Леонтьев кулленех нормăна 200 процент таран тултарса ĕçлерĕ. М. Владимиров, А. Васильев, Д. Николаев колхозниксем суха тунă çĕрте кăтартуллăн ĕçлерĕç.

С. ШАДИН.

Стахановецсене парти ретне илнĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. МТС çумĕнчи пуçламĕш парторганизаци 1942 çулта вунă стахановеца — трактор бригадин бригадирĕ Карпов, трактористка Морозова, участокри агроном Николаева юлташсене ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Çак юлташсем хăйсен ĕçĕсене тăрăшса туса пыраççĕ.

Р. ВАСИЛЬЕВА.

Контрактаци планне халех пурнăçламалла

СĔНТЕР. (Хамăр корр.). Апчар ялсоветĕнчи «Прожектор», «Аврора», «Крестьянская газета» колхозсем çамрăк выльăхсене контрактацилес плана ăнăçлăн пурнăçланă. Ялсоветĕнчи колхозсем планран ирттерсе 15 пăру, 25 путек контрактациленĕ. Çавăн пекех Хачăк ялсоветĕнчи «Большевик» колхоз та планран ирттерсе 13 пăру, 6 путек контрактациленĕ.

Çамрăк выльăхсене контрактацилес плана кашни колхозрах ăнăçлăн пурнăçлас тĕлĕшпе райçĕрĕç пайĕн зоотехникĕсем колхозсене час-часах тухса çўреме пуçларĕç.

Майăн 21-мĕш тĕлне Сĕнтĕр районĕ пăрусем, сысна çурисем контрактацилес плана пĕтĕмĕшпех пурнăçланă. Анчах путексене контрактацилес ĕç халĕ те çителĕксĕр пулса пырать-ха. План тăрăх 1000 путек контрактацилемелле пулсан, пурĕ те 580 путек кăна контрактациленĕ. Калайкасси ялсоветĕнчи «Марксист», «Ударник» колхозсем путексене контрактацилеме тытăнман.

Г. АКИМОВ.

Государствăна çăмарта параççĕ

ОКТЯБРЬСКОЕ. Районри чылай колхозсем государствăна 1942 çулшăн çăмарта параççĕ. Çак кунсенче Кутемерти «Коммунизм» колхоз 250 çăмарта, Кив Акчурари «Путь Ленина» колхоз 232 çăмарта, Хуракассинчи «Социализм» колхоз 180 çăмарта пачĕç.

В. ВЛАДИМИРОВ.

* * *

КАНАШ. Вăтаниас Талмăш ялсоветĕнчи Чкалов ячĕпе тăракан колхоз членĕсем государствăна çăмарта парас обязательствăна пурнăçласа пыраççĕ. Василиса Яранекова государствăна çăмарта парас обязательствăна тултарнă. Çавăн пекех М. Ефимов, Г. Яковлев, К. Яранеков колхозниксем те хăйсен планне ăнăçлăн пурнăçланă.

Анчах та ялсоветĕнчи колхозсем государствăна çăмарта парас обязательствăна вăхăтра пурнăçласа пымаççĕ. «Динамо» колхоз майăн 17-мĕш тĕлне 251 çăмарта, «Париж Коммуни» колхоз 86 çăмарта кăна панă. Чкалов ячĕпе тăракан колхозра та ĕç çавăн пекех япăх тăрать.

Т. ТУРХАН.

ВКП(б) ОБКОМĔНЧЕ

1942 çулта пионерсен лагерĕсене организацилесси çинчен

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ йышăннă тăрăх, пионерсен лагерĕсене организацилесе ирттерме республикăри комисси тунă. Комиссие çак юлташсене кĕртнĕ: Чăваш АССР Совнаркомĕн председатель заместителĕ **Евламньев** (комисси председателĕ), ВКП(б) Обкомĕн секретарĕ **Аказов**, ВЛКСМ Обкомĕн секретарĕ **Башкирова**, Сутĕç Халăх Комиссарĕ **Макаров**, Сутуилу Халăх Комиссарĕ **Никитин**, Сывлăха сыхлав Халăх Комиссарĕ **Лихачев**, Физкультурăпа спорт Комитечĕн председателĕ **Никишева**, пуçламĕш тата вăтам шкулсенчи работниксен союзĕн Обком председателĕ **Русланова** тата Медсантруд союзĕн Обком председателĕ **Грачева** юлташсем.

Пионерсен лагерĕсене организацилесе ирттерме хуласенче тата районсенче комиссисем пулаççĕ.

ВКП(б) Обкомĕн бюровĕ партин хула комитечĕсемпе райкомĕсене 1942 çулта пионерсен лагерĕсене организацилес ĕçе тимлĕн туса пыма, кашни лагерьтех йĕркелĕх тума, лагерьсем валли çуртсем, оборудовани, апат-çимĕçсем çителĕклĕ таран уйăрса пама хушнă.

Кăçал пионерсен лагерĕсенче пирĕн республикăра пĕтĕмпе 3100 ача пулмалла. Лагерьсем июнĕн 5-мĕшĕнче ĕçлеме тытăнмалла та августăн 25-мĕшĕнче хупăнмалла.

Пионерсен лагерĕсене пуринчен малтан çар тата пиравăр промышленноçĕсенчи рабочисемпе служащисен сывлăха çирĕплетме кирлĕ ачисене, фронтовиксен тата чухăн ачаллă работницăсен ачисене илмелле. Хĕрлĕ Çарăн фронтра вилнĕ боецĕсен ачисене укçа тўлеттермесĕрех лагере вырнаçтармалла. Пионерсен лагерĕсенчи вырăнсен 5 процентне фабзавкомсемпе месткомсене параççĕ.

Обком бюровĕ Чăваш АССР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе ВЛКСМ Обкомне пионерсен лагерĕсенче кашни кунах воспитани ĕçне йĕркеллĕн туса пыма хушнă.

Пионерсен лагерĕсенчи ачасене медицина пулăшăвне парса тăма Чăваш АССР сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕн врачсемпе сестрасем çителĕклĕ уйăрмалла, лагерьсене çывăхри больницăсем пулăшу парас ĕçе организацилемелле.

Гитлерла пиратсен провокацийĕ

ЛОНДОН, майăн 24-мĕш. (ТАСС). Рейтер агентствин Стамбулри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, Хура тинĕсĕн Болгари патĕнчи шывĕсенче, Василикос сăмсахĕ патĕнче, Турцин «Шефак» ятлă пароходне, 550 тонна водоизмещениллĕскерне, торпеда ярса путарнă. Çав суднăн капитанĕ тата командăри 9 çын çăлăнса юлнă. «Шефак» пароход Болгарин Бургас портĕнчен Стамбула каялла пынă пулнă. Юлашки 5 кун хушшинче ĕнтĕ Турцин иккĕмĕш суднине çапла торпедăласа путарнă.

* * *

Рейтер агентствин пĕлтерĕвĕнче туроксен суднине путарни çинчен каланă пирки гитлерла радиостанцисем çав суднăна советсен подводнăй лодки путарнă тесе черетлĕ суя сăмах сарма васканă.

Юлашки вăхăтра Турцин суднисене, уйрăм илсе каласан—Турципе Болгари порчĕсем хушшинче çўрекен суднăсене, каллех час-часах путарма тытăнчĕç. Çавăн пек путарнă хыççăн кашни хутĕнчех вара гитлерла пропагандăн вараланчăк çăлкуçĕсенчен: туроксен ку суднине советсен подводнăй лодки путарнă, тесе калакан элекле пĕлтерўсем васкаса сараççĕ.

Çавăн пек куçкĕретĕнех суйса пĕлтернисем вĕсем пурте гитлерла пиратсем хăйсен преступленийĕсен йĕрĕсене шăлса лартма хăтланни пулса тăраççĕ. Туроксен суднисене Германин Хура тинĕсре ишсе çўрекен подводнăй лодкисем путарни пирки нимĕн иккĕленмелли те çук. Гитлерла бандитсем нейтральнăй çĕршывăн судоходстви тĕлĕшпе тăвакан çав преступленисем те, çавăн пек вăрă-хурахла кашни çĕнĕ ĕç хыççăнах гитлерла пропаганда васкаса саракан элекле пĕлтерўсем те провокациллĕ тĕллевпе тунăскерсем пулса тăни пуриншĕн те паллă. (ТАСС).

Фашистла пиратсем Мексикăн тепĕр танкерне путарнă

Мексикăра ятарласа парламент сессине пухаççĕ

НЬЮ-ЙОРК, майăн 24-мĕш. (ТАСС). Пичет пĕлтернĕ тăрăх, майăн 20-мĕшĕнче çĕрле Куба çыранĕсем çывăхĕнче Мексикăн иккĕмĕш танкерне—600 тонна водоизмещениллĕ, «Фахадеро» ятлă танкерне торпеда ярса путарнă. Командăран 10 çын пĕтнĕ. Ку танкера ĕнтĕ Мексика правительстви тĕнĕл держависене Мексикăн «Портреро де Льяно» ятлă танкерне путарнине хирĕç протест панă хыççăн путарнă.

Министрсен кабинечĕн ларăвĕ пулса иртнĕ хыççăн официальнăй йĕркепе çапла пĕлтернĕ: тĕнĕл держависем агрессиллĕ ĕçсем тунă пирки, вĕсем Мексика çуднисене путарнă пирки, Мексикăн президенчĕ тĕнĕл держависене хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтерес тата кирлĕ мерăсем йышăнас ыйтăва сўтсе-явмашкăн ятарласа Мексика парламенчĕн сессине пухма хушнă.

Мексикора фашистсене хирĕçле демонстраци пулнă

НЬЮ-ЙОРК, майăн 25-мĕш. (ТАСС). Мексикăн икĕ танкерне путарнă май Мексикора майăн 24-мĕшĕнче тĕнĕл держависене хирĕç йышлă демонстраци пулса иртнĕ. Демонстрацире 100 пин çын пулнă. Демонстрантсене президент Авила Камачо, правительство членĕсемпе парламент членĕсем, Мексикăри рабочисен организацийĕсемпе хресченсен организацийĕсен руководителĕсем саламланă. Правительствăн радиостанцийĕ çапла пĕлтернĕ: «Эпир, демонстраци туса, президента тата пĕтĕм тĕнчене, çав шутрах тата тĕнĕл держависене те, Мексика пĕрлĕхлине, вăл вăрçăра çĕнтерес кăмăлпа пурăннине кăтартса паратпăр».

Демонстрацире Америка, Англи, СССР тата Китай çарĕсен тумтирĕсене тăхăнса, Пĕрлешўллĕ Штатсен, Англин, Совет Союзĕн тата Китайăн нациллĕ ялавĕсене йăтса пынă демонстрантсене тăвăллăн алă çупса кĕтсе илнĕ. Демонстрантсем фашистла Германин ялавне çунтарса янă.

Юнайтед пресс агентствин корреспонденчĕ çакна палăртать: Мексикора пулса иртнĕ демонстраци Мексикăри рабочисем Совет Союзне кăмăлланине кăтартса панĕ, тет.

Мексика парламенчĕн ятарласа пухăнакан сессине, тĕнĕл держависене хирĕç вăрçă пуçласси çинчен пĕлтерес ыйтăва сўтсе-явма пухăнаканскерне, майăн 28-мĕшĕнче пухаççĕ.

Германири юнлă террор

ЦЮРИХ, майăн 24-мĕш. (ТАСС). Германирен пĕлтернĕ тăрăх, гитлеровецсем Германи халăхне хирĕç туса пыракан юнлă террор вăйланса кайнă. Çакă вăл кăмăлсăр çынсене пĕр шеллемесĕр пĕтерсе пырасси çинчен Гитлер юлашки сăмахра каланин результачĕ пулса тăрать, тесе шутлаççĕ. Çак кунсенче Германири радио Мангейм хулинче 14 çын. мĕçе персе вĕлерни çинчен пĕлтернĕ. Вĕлернĕ çынсене вĕсем фашистсене хирĕçле ĕçсем тунăшăн айăпланă.

Влаçсем Германи халăхне хирĕç çĕнĕ репрессисем хатĕрлеççĕ. Германи халăхĕ вара хăй хальхи режимпа килĕшменнине фронта çыракан çырусенче кăтартса парать. «Свенска Дагбладет» хаçатăн Берлинри корреспонденчĕ пĕлтернĕ тăрăх, хальхи вăхăтра Германири почта аппаратĕнче ятарласа «СС» отделĕ тунă, унăн начальникĕ пулма генерал-лейтенант Бергера лартнă. Çапла майпа гестапо почтăна контроль туса тăрассине вăйлатма шутлаççĕ. Çакна май Германире халăх хушшинче нумай арестсем пулса иртессе кĕтеççĕ. Германин чылай салтакĕсене те «вĕсем хăйсен тăванĕсем патне ырă мар çырусем çырнăшăн» ответ тыттарĕç, тесе шутлаççĕ.

ГЕРМАНИЯ ВЫÇĂ ЛАРАТЬ

СТОКГОЛЬМ, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Çĕршывра апат-çимĕç тĕлĕшĕнчен пурнăç начарланса пынă пирки Германири халăх хăй тарăхнине уççăнрах та уççăнрах палăртма тытăнни çинчен гитлерла хаçат-журналсем хăраса çыраççĕ. «Националь цейтунг» хаçат çапла калать: мĕнле тăранса пурăнас текен ыйту халăх хушшинчи мĕншур калаçусен пĕртен пĕр теми пулса тăрать, тет.

«Вестдейчер беобахтер» хаçат çиллеслесе: лавккасенче «патриотизмла мар калаçусене» час-часах илтме пулать, тесе çырать, çавăн пек пухăнса кăмăллă çынсене хытă тыткалама чĕнет.

Финляндири халăх йывăр нуша тўссе пурăнать

СТОКГОЛЬМ, майăн 25-мĕш. (ТАСС). «Вестманландленс Тиднинген» хаçат, Финляндире продовольстви тĕлĕшпе питех те пысăк йывăрлăхсем пуррине кăтартса, çапла çырать:

«Юлашки çул хушшинче Хельсинкире нумайĕшĕ питех те начарланса кайнă. Вĕсене паллама та çук. Çиме юрăхсăр япаласем темĕн чухлех хутăштарса тултарнă начар çăкăрпа çăкăр пĕçереççĕ. Çĕрулми вырăнне çынсем хĕрлĕ кăшман çиеççĕ».

Пуринчен ытла Финляндире ачапăчасене питĕ йывăр килет. Выçă вилĕмпе вилес патне çитнĕ 20.000 ачана Швецие илсе кайнă.

Финлянди влаçĕсем хресченсене çаплах çаратаççĕ, вĕсен юлашки çăкăр татăкне туртса илеççĕ. Хаçатсем хресченсене продовольстви паманшăн тĕрлĕ репрессисемпе хăратаççĕ, «сирĕн патриотизм çителĕксĕр мар» тесе юнаççĕ вĕсене.

Нимĕçсем оккупациленĕ çĕршывсенче

НЬЮ-ЙОРК, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Юнайтед пресс агентстви пĕлтернĕ тăрăх, Парижра нимĕç оккупантсен влаçĕсем йышăнса тăракан икĕ çуртра взрывсем пулнă. Париж центрĕнчи площадьсенчен пĕринче 17 çулти çамрăк арçын нимĕç офицерне револьвертен пенĕ.

Лилль хулинче гитлеровецсем 3 француза асаплантарса вĕлернĕ: вĕсенчен иккĕшне Англи салтакĕсене пытарса усранăшăн, теприне Германие хирĕç саботажла ĕçсем тунăшăн айăпланă.

Францин оккупациленĕ пайĕнчи пысăк чугунçул çывăхĕнче пурăнакан французсене гитлеровецсем ирĕксĕрех чугунçула «кăçхи вăхăтра хурал тăракан сторож» туса хураççĕ. Кун пек сторожсен хăйсен çуртĕ çывăхĕнчи чугунçул участокне сыхласа тăмалла. Чугунçул çинче инкек пулсан, нимĕçсем пĕтĕм айăпа çав ирĕксĕр тăратнă «сторожсем» çине хураççĕ, çапла вара çак сторожсем гитлеровецсен «заложникĕсем» вырăнне пулса тăраççĕ.

Транспортри рабочисен пĕтĕм тĕнчери федерацийĕн бюллетенĕ пĕлтернĕ тăрăх, Нант хулинче асаплантарса вĕлернĕ француз-заложниксем хушшинче Францири паллă деятельсем Гран Мишель, Пульмарк тата Тимбо пулнă. Оккупантсен влаçĕсем вĕсене нимĕçсемпе килĕштерсе ĕçлеме сĕннĕ. Профсоюзсен паллă руководителĕсем нимĕçсем сĕннине килĕшмен, çакăн хыççăн вĕсене тепĕр ирхинех асаплантарса вĕлернĕ.

СТОКГОЛЬМ, майăн 23-мĕш. (ТАСС). Швеци хаçачĕсем Норвегире массăллă арестсем пулни çинчен пĕлтереççĕ. Майăн 11—12-мĕш кунĕсенче кăна 200 çынна ытла арестленĕ. Пуринчен ытла студентсене тытса хупнă. Квислинговецсем Осло хулинчи Хĕрлĕ Хĕрес çуртне те хупнă. Хĕрлĕ Хĕрес çуртне хупиччен малтан унта ĕçлекенсене нумайĕшне арестленĕ. Хĕрлĕ Хĕрес организацин генеральнăй секретарьне арестленĕ.

Çавăн пекех Норвегин нумай хулисенче потребитель кооперацин паллă руководителĕсене те арестленĕ. Кăнтăр Норвегире паллă интеллигентсене тытса хупнă. Çак арестсем çинчен пĕлтерсе, Швеци хаçачĕ «Упсала Нюа тиднинг» хаçат çапла çырать: «Халĕ ĕнтĕ Норвеги çыннисем оккупантсене курайми пулчĕç, халăх пăлханасси вăйланса пырать».

Еврей халăхĕн представителĕсен иккĕмĕш митингĕ

Майăн 24-мĕшĕнче Мускавра еврей халăхĕн представителĕсен иккĕмĕш митингĕ пулса иртнĕ.

Митинга еврейсен антифашистла комитечĕн председателĕ—СССР-ăн халăх артисчĕ профессор **Соломон Михоэлс** уçать. Митинга уçнă май вăл, еврей халăхĕн представителĕсен малтанхи митингĕ пулса иртнĕренпе тăхăр уйăх хушшинче аслă отечественнăй вăрçăн фрончĕсенче пулнă улшăнусем çинчен каласа парать.

Трибуна çине еврей поэчĕ — драматург **Арон Кушнеров** тухать, вăл Хĕрлĕ Çар боецĕ, ăна «За боевые заслуги» медальпе наградăланă.

— Эпĕ кунта фронтран килсе çитрĕм. Унта пирĕн геройла Хĕрлĕ Çар фашистла ирсĕрсене совет çĕрĕнчен вутлă шăпăрпа шăлса тасатать,—тет Кушнеров юлташ.—Иртнĕ кĕркунне Гитлер дивизийĕсем пирĕн тăван çĕршывăн чĕри —Мускав патнелле пынă чух, эпĕ вырăс халăхĕн ывăлĕсемпе пĕрле— капитан Виноградовпа, Ивановпа Киселев политруксемпе пĕрле, пушкăрт халăхĕн ывăлĕпе—Ахтян Сулеймановпа пĕрле, еврей красноармеец Нидерманпа тата ыттисемпе те пĕрле — тăшманăн шалти тылĕнче пултăм. Эпир хамăр çула штыксемпе, гранатăсемпе уçса тухрăмăр. Хамăрăн тăван полк патне тăшман виллисем урлă утса тухса, Мускава хўтĕлекенсен ретне хутшăнтăмăр. Еврей халăхĕ çак аслă отечественнăй вăрçăра тăван совет çĕршывне нумай паттăр боецсемпе геройсем пама пултарчĕ,—тет Кушнеров юлташ.

Микрофон умне еврейсен литература критикĕ, публицист, еврейсен СССР-ти антифашистла комитечĕн ответлă секретарĕ тата еврейсен «Эйникайт» ятлă хаçачĕн редакторĕ — **Шахно Эпштейн** юлташ тухать.

— Хĕрлĕ Çар речĕсенчи тĕрлĕ йышши хĕçпăшалпа çапăçакан тата партизансен отрячĕсенче кĕрешекен çĕршер, пиншер еврей боецĕсене пирĕн правительство вăрçăра паттăрлăхпа хăюлăх кăтартнăшăн орденсемпе тата медальсемпе наградăларĕ,—тет Эпштейн юлташ. — Вĕсенчен нумайĕшĕ Совет Союз Геройĕн званийĕсене те илме тивĕçлĕ пулчĕç. Еврейсен юнĕ тата вĕсен геройлăхĕ пĕтĕм тĕнчери еврейсене пĕрлешме, пирĕн аслă Совет çĕршывĕпе пĕр шухăшлă пулма тата пĕрпĕрне ăнланма чĕнет.

Малалла иккĕмĕш рангри военврач **Григорий Цифринович** юлташ тухса калать.

Академик **Александр Фрумкин** хăйĕн сăмахне англичанин чĕлхипе каласа парать.

— Хальхи вăхăтра пĕтĕм совет ученăйĕсем, çав шутрах еврей ученăйĕсем те, пĕтĕм вăйне-халне хамăр çĕршыв оборонине тĕреклетес ĕçе хураççĕ,—тет вăл.—Эпир гитлеризма курайманпăр, çавăнпа та ăна çĕмĕрсе тăкас тĕлĕшпе мĕн тума кирлине пурне те тăватпăр.

Малалла 220-мĕш номерлĕ заводри цех начальникĕ, орденоносец **Семен Неймарк**, Куйбышев облаçĕнчи еврейсен «Най Лебн» ятлă колхозĕн председателĕ **Давид Шупак**, скульптор, Сталинла премин лауреачĕ, Азербайджан ССР-чи искусствăсен тава тивĕçлĕ деятелĕ **Пинхос Сабсай**, писатель **Давид Бергельсон**, паллă поэт—Сталинла премин лауреачĕ **Самуил Маршак** тата Украинăри наукăсен академийĕн член-корреспонденчĕ **Илья Спивак** тухса калаççĕ.

Митингри çынсем пĕтĕм чĕререн хавхаланса совет халăхĕсен çулпуçĕ — Иосиф Виссарионович Сталин патне саламлă çыру яма йышăнаççĕ.

«Сталин юлташ,—теççĕ митингри çынсем пĕтĕм еврей халăхĕн шухăшĕсемпе кăмăл-туйăмĕсене каласа парса,—ĕçпе кĕрешўн кирек мĕнле участокĕнче пулсан та, эпир хамăрăн хĕçпăшала—винтовка-и вăл, пулемет-и, самолет-и, бронепоезд-и, е станок-и, трактор-и, комбайн-и,—хамăр ĕçĕн мастерĕ пулса тăшмана пĕр йăнăшсăр тĕл çапас тесе, вĕсене пурне те пĕтĕмĕшпех вĕренсе çитме сăмах паратпăр».

Юлашкинчен пĕтĕм тĕнчери еврейсене чĕнсе калакан возвавни йышăнма сĕнў параççĕ. Ку сĕнĕве пурте пĕр кăмăллă пулса йышăнаççĕ.

Еврей халăхĕн представителĕсен митингне радио тăрăх панă. (ТАСС).

Эмел тумалли йывăç-курăксене пухасси

РСФСР Çутĕç Халăх Комиссариачĕпе Сывлăха сыхлав Халăх Комиссариачĕ халăх сывлăхне упрас тĕлĕшпе тата халăха сутта кăларас тĕлĕшпе ĕçлекен организацисем валли приказ кăларнă. Ку приказ çак çуркуннепе çулларан пуçласа эмел тумалли йывăç-курăксем пухас ĕçе педагогсене тата вĕренекен ачасене ытларах хутшăнтарма хушать. Çак ĕçе организацилеме кашни шкултах пĕрер ответлă учитель уйăрмалла. Эмел тумалли йывăç-курăксене пуçтармалли тата типĕтмелли техникăна вĕрентме учительсемпе пионер вожатăйĕсем валли çитес кунсенчех семинарсем туса ирттермелле. Эмел йывăç-курăкĕ пухнипе ĕçлесе илнĕ укçана ĕçлекенĕсем хăйсем ярас теççĕ — çавăнта ямалла. Харпăр хăй тĕллĕн ĕçлекен шкул ачисем, эмел курăкĕсене пырса парсан, укçине хăйсен аллине илеççĕ.

Малтанхи вăхăтра тимĕрен çулçи, валерьян тымарри, лантăш, çăка чечекĕ, йытçĕмĕрт хуппи, ырашăмăшĕ, ыртăш çырли, хура çырла, хурлăхан çырли т. ыт. те пухма тытăнмалла. (ТАСС).

Ответлă редактор **В. Я. ЯКОВЛЕВ.**

КУРСЫ ПОДГОТОВКИ ШОФЕРОВ И ТРАКТОРИСТОВ-УКАТЧИКОВ

объявляют, что занятия на курсах начнутся 29 мая 1942 года.

Лицам, оформившим свои документы, а также и вновь желающим поступить на курсы, нужно явиться к указанному сроку в отдел кадров.

Условия приема объявлены в газете «Красная Чувашия» № 91 от 8 апреля 1942 г.

Адрес: гор. Чебоксары, ул. Калинина, 51.

Управлению Промкооперации при СНК РСФСР по Чувашской АССР

ТРЕБУЮТСЯ НА РАБОТУ:

инженеры: по металлу, по деревообработке, лесохимии, кожевенно-обувной промышленности, по стройматериалам и по пищевкусовой промышленности, а также старший статистик, статистик, главный бухгалтер, бухгалтер-ревизор.

Обращаться по адресу: гор. Чебоксары, Красная площадь, дом № 7.

КАЗАНСКИЙ ГОСУДАРСТВЕННЫЙ ВЕТЕРИНАРНЫЙ ИНСТИТУТ им. Н. Э. БАУМАНА

объявляет прием студентов на 1942—1943 учебный год.

Срок обучения в Институте 3½ года.

Правила приема в Институт общие для всех поступающих в ветеринарные ВУЗы Наркомзема СССР в 1942 г.

Поступающие в Институт подвергаются испытаниям по русскому языку и литературе, физике и химии. Без испытаний принимаются отличники и окончившие средние школы в 1942 г.

Прием заявлений до 1 августа, приемные испытания с 1-го по 20 августа 1942 года.

Все иногородние, поступающие в число студентов Института, обеспечиваются жилплощадью.

Заявления о приеме в Институт подаются на имя директора Института с приложением: подробной автобиографии, аттестата об окончании среднего учебного заведения (в подлиннике), трех фотокарточек и справки об отношении к воинской обязанности (для военнообязанных). Паспорт предъявляется при личной явке в Институт.

Адрес: гор. Казань, угол ул. В. Красной и Красина, д. № 9/8.

3—1.

ЧЕБОКСАРСКИЙ КОММУНАЛЬНО-СТРОИТЕЛЬНЫЙ ТЕХНИКУМ

объявляет прием студентов на 1942-43 год.

Техникум готовит техников-строителей по промышленному и гражданскому строительству. Срок обучения 3 года. Принимаются лица обоего пола от 15 до 30 лет с отрывом от производства.

Прием заявлений до 10 августа. К заявлению должны быть приложены следующие документы: а) автобиография, б) свидетельство об окончании НСШ (в подлиннике), в) три фотокарточки (снимок без головного убора), г) свидетельство о рождении, д) справка о здоровье, е) паспорт (предъявляется при личной явке).

На 1-й курс техникума принимаются без испытаний окончившие НСШ, 8 и 9 классы средней школы в 1941 и 1942 годах. Также без испытаний принимаются демобилизованные из рядов РККА инвалиды отечественной войны, имеющие подготовку не ниже семи классов НСШ независимо от времени окончания ее. На 2-й курс принимаются без испытаний окончившие полную среднюю школу (рабфак, вечернюю полную среднюю школу) с условием обязательной сдачи в течение первого семестра общетехнических и специальных дисциплин, пройденных на первом курсе. На 3-й курс без испытаний принимаются окончившие 2 курса в 1942 году (строительный техникум, машиностроительный и железнодорожный), а не окончившие их — с испытанием.

Отличники средней школы и НСШ с 1 сентября зачисляются на стипендию. Принятые в техникум общежитием и столовой не обеспечиваются.

Плата за обучение в техникуме — 150 руб. в год — вносится равными долями в два срока. Дети пенсионеров и военнослужащих рядового и младшего начальствующего состава освобождаются от оплаты за обучение.

Начало занятий с 1 сентября.

Заявление направлять по адресу: гор. Чебоксары, Чувашской АССР, ул. Новая, 22, Чебоксарский Коммунально-Строительный техникум.

Для ответов должны быть вложены в конверт почтовые марки на 60 коп.

ДИРЕКЦИЯ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского, 5, Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ: редакторăн — 0—67, редакци секретарĕн — 4—26, пропагандăпа парти пурнăç пайĕн — 5—31, ялхуçалăх пайĕн — 3—99, комсомол пурнăç пайĕн — 0— издательство конторин — 0—23.

НТ, 306

Гор. Чебоксары, типография № 1 Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР. Заказ № 260. Ф. 6. 58 64 п: л: